Октябрĕн 8-мĕшĕнче - ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ

ЧР Патшалăх Канашне 8-мĕш Муркаш суйлав округĕпе депутата суйлама тăратнă кандидат
**Александр Платонович ДАВЫДОВ**




Материал тӳлевсĕр пичетленет.

Октябрĕн 8-мĕшĕнче - ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ

## Октябрĕн 8-мĕшĕ

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ КАНАШĔН ДЕПУТАЧĔСЕНЕ СУЙЛАМАЛЛИ КУН**

Эсир тăван республикăна чечеклентересшĕн пулсан
**«ЕДИНАЯ РОССИЯ» ПАРТИШĔН САСĂЛĂР**

Эсир промышленноçпа ял хуçалăхне çĕклесшĕн пулсан
**«ЕДИНАЯ РОССИЯ» ПАРТИШĔН САСĂЛĂР**

Сирĕншĕн хăвăрăн ачăрсен малашлăхĕ хаклă пулсан
**«ЕДИНАЯ РОССИЯ» ПАРТИШĔН САСĂЛĂР**

Эсир пурнăç шайĕ тивĕçтертĕр, ыранхишĕн пăшăрханас мар тетĕр пулсан
**«ЕДИНАЯ РОССИЯ» ПАРТИШĔН САСĂЛĂР**

Эсир кашни халăхăн культурипе йăли-йĕрки çураçуллă республикăра пурăнасшăн пулсан
**«ЕДИНАЯ РОССИЯ» ПАРТИШĔН САСĂЛĂР**

**№1**

ЕДИНАЯ РОССИЯ

**«ЕДИНАЯ РОССИЯ» – ВĂЙЛĂ ЧĂВАШ ЕН**

Материал тӳлевлĕ пичетленет.

### Çырăнтару-2007

## Çитес çул илсе тăма

*Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2007 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. 6 уйăха çырăнмалли хак – 148 тенкĕ те 26 пус.*

*Хаçата вăхăтра çырăнса илме тăрăшăр.*

**Район хаçачĕн редакцийĕ.**

Октябрĕн 8-мĕшĕнче - ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ

## ЧР Патшалăх Канашне 8-мĕш Муркаш суйлав округĕпе депутата суйлама «Единая Россия» партирен тăратнă кандидат Владислав Григорьевич ДАНИЛОВ



*Эпĕ Муркаш районĕнче Мăн Токшик ялĕнче 1953 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. Атте – Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕ, анне – пуçламăш классене тата музыкăпа вĕрентекен пулса ĕçленĕ.*

*Муркашри вăтам шкула вĕренсе пĕтерсен 2 çул Шупашкарта "Чувашкабель" тата Чапаев ячĕллĕ заводра слесарь пулса ĕçлерĕм.*

*1972-1974 çулсенче Совет çарĕнче çĕршывăн кăнтăр чиккисене хуралларăм.*

*1974-1980 çулсенче И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш Патшалăх университечĕн медицина факультетĕнчен вĕренсе тухрăм.*

*1981-2002 çулсенче Муркашри тĕп больницăра врач-хирург пулса ĕçлерĕм.*

*2002 çулхи январьтен пуçласа Муркаш районĕнчи больницăн тĕп врачĕ пулса ĕçлетĕп.*

*1990-1994 çулсенче ЧАССР Аслă Совечĕн депутачĕ, 1998-2002 çулсенче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ пулса ĕçлеме суйларĕç.*

*2005 çулта декабрьте Муркаш районĕн депутачĕсен Пухăвĕн депутатне, районăн депутатсен Пухăвĕн председательне суйларĕç.*

*2006 çулхи февраль уйăхĕнче Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕн ятне пачĕç.*

**Эпĕ пурнăçа халăх сывлăхне сыхлас ĕçе халалларăм. Чĕрĕк ĕмĕр ытла ял çыннин пурнăçне лайăхлатассишĕн, вăрăм та тулли пурнăçпа пурăнма тата хастар ĕçлеме условисем туса парассишĕн, паянхи кун ыйтнă пек эффективлă ĕçлекен больницăсен, врачсен офисĕсемпе амбулаторийĕсен, ытти медицина учрежденийĕсен сетьне туса хурассишĕн тăрăшатăп.**

**Эпĕ хамăн тĕп задачăсем çаксем тесе шутлатăп:**

**– Вăйлă влаçлă демократиллĕ общество тумалла: вăл общество пурнăçне йĕркелесе яма, унăн пурлăх тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвне лайăхлатма пулăштăр, тĕрĕслĕх малти вырăнта пултăр. Çынсен пурнăç шайне чăннипех те ӳстерме пулăшакан саккунсем йышăнмалла.**

**– Ял хуçалăх предприятийĕсене патшалăх енчен пулăшмалла тата вĕсенче малта пыракан технологипе пысăк çитĕнӳсен шайне кăларма пултаракан мерăсем йышăнмалла. Ял çыннине социаллă хӳтлĕх паракан системăсем кирлĕ: ял çынни çурт лартма, çамрăк çемьесем çăмăллăхлă кредит илме пултарччăр.**

**– Предпринимательствăпа пĕчĕк бизнеса аталантармалла.**

**– Бюджет сферин учрежденийĕсемпе организацийĕсен системине финанслассине çĕнетсе аталантармалла. Вĕрентекенсен, врачсен тата культурă ĕçчĕнĕсен укçине ӳстермелле. Çамрăксем професси тата аслă пĕлӳ илме пултарччăр. Çăмăллăхлă вĕрентӳ кредитне парас система çак ыйтăва татса пама пулăшать. Халăх сывлăхне сыхлас ĕçе ялта хулари шая çитермелле.**

**– Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçне малалла аталантармалла, вĕсен ĕçне татах та лайăхлатмалла.**

**– Ветерансен, хĕрарăмсен тата çамрăксен организацийĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлемелле, вăрçă ветеранĕсене, тăлăх арăмсене, тыл ĕçченĕсене тата пенсионерсене уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрмалла, ытларах пулăшмалла.**

**– Йĕрке кирлĕ, апла пулсан витĕмлĕ контроль кирлĕ. Алкоголизмпа тата наркоманипе кĕрешмелле, ачасемпе çамрăксене физкультура занятийĕсемпе спорта явăçтармалла.**

**Хисеплĕ суйлавçăсем, кама суйласси – сирĕн кăмăл. Пурне те сире октябрĕн 8-мĕшĕнче хамăр Республика пуласлăхĕшĕн сасăлама чĕнетĕп.**

**Аслă ăрури çынсене çитсе килекен Ватă çынсен кунĕ ячĕпе саламлатăп. Сире пурсăра та çирĕп сывлăх, тăнăç пурнăç тата вăрăм кун-çул сунатăп.**

**Сирĕн кандидат**
**Владислав ДАНИЛОВ.**

Материал тӳлевлĕ пичетленет.

Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕнче

# Çын чунĕ илемлĕ пултăр

Виçĕм кун "Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкне" ирттерессипе ĕçлекен канашăн черетлĕ ларăвĕ иртрĕ. Ăна район пуçлăхĕ, асăннă Канаш председателĕ Ю. Иванов ертсе пычĕ.

Унта чи малтанах Чуманкасси, Йӳçкасси, Уйкас Янасал, Турай ял тăрăхĕсенче ку тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем туса ирттернине тишкерчĕç. Палăртмалла, пур çĕрте те ку енĕпе вăл е ку ĕçсене туса ирттереççĕ. Çав хушăрах, район пуçлăхĕ Ю. Иванов калашле, кулленхи çитменлĕхсене пĕтерес тĕллевпе кулленех тăрăшма хăнăхмалла пирĕн. Хамăрăн кил-çурт тавра пăхса çаврăнар-ха. Е ялти парксемпе ытти учрежденисен тавра мĕнле лару-тăру?

Ашкăрса ларакан мăянсене çулманни те пирĕн культура шайне аталантарассишĕн тимлемелли пирки калать.

Е тата суицид тĕслĕхĕсене илер. Йывăрлăхран çапла çăлăнмалла-и вара? Ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен аталаннă çын тата хăйĕн пурнăçĕпе ачисен малашлăхне эрех стаканĕпе улăштарнă пулĕччĕ-ши?

Çук пуль. Мĕн тĕкет çынсене çав тĕпсĕр çырана? Мĕнле тытăнмалла ун айккине сулăнмасăр? Акă, мĕн пирки шухăшламалла паян ытти нумай ыйтăва татса панипе пĕрле.

Çавăнпа та çитĕнекен ăрăва ĕçе явăçтарни те вырăнлах пуль. Кунта асăннă канашăн тепĕр ыйтăвĕнче пăхса тухнă пек ĕç династийĕсене аталантарассишĕн тимлени çав тери вырăнлă. Ан тив, вĕрентекенĕн, тухтăрăн, çĕр ĕçченĕн тата ытти профессисем мĕн тери кирлине çав династисене кура ăнланччăр. Паянхи куна районта 54 ĕç династийĕ: вĕрентӳ ĕçĕнче – 13, ял хуçалăхĕнче – 31, сывлăх сыхлавĕнче – 4, т.ыт.те. Ку чикĕ мар.

Уйрăм ял тăрăхĕсемпе илсен ĕç династийĕсем Ярославка ял тăрăхĕнче – 21, Хорнуй – 6, Муркаш (4), Турай (5) ял тăрăхĕсенче ытларах. Асăнмалла, юлашки çулсенче тĕрлĕ профессисен конкурсне ирттересси те çитĕнекен ăрăва вăл е ку ĕç пурнăç тыткăчи пулнине ăша хывса ӳсме май парать.

Халĕ пĕр ыйту. Ăс-хакăл енчен аталаннă çын сиенлĕ пулăмсене иленет-ши? Çук. Асăннă канаш ларăвĕнче наркоманипе СПИД çул çитмен çамрăксен хушшинче ан сарăлтăр тесе районта мĕн туса ирттернине те тишкерчĕç. Вĕрентӳ учрежденийĕсенче тĕрлĕрен калаçусем ирттереççĕ. Çамрăксем пушă вăхăта усăллă ирттерччĕр тесе кружоксем ĕçлеççĕ.

Телее, çул çитмен çамрăксем хушшинче наркотиксемпе иртĕхекенсем çук. Ку лару-тăру япăх еннелле ан улшăнтăр тесе пирĕн тимлĕхе çухатмалла мар.

Ларура пăхса тухнă ыйтусенчен тивĕçлĕ йышăнусем турĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**